26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АПРЕЛЬ
21
ЮНКУН
85(6322) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсене кăтартуллăн хатĕрленсе ирттерĕр!

Вĕренӳ çулĕн йывăр та ответлă тапхăрĕ çитрĕ. Тепĕр уйăхран — майăн 20-мĕшĕнче пур шкулсенче те çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланаççĕ. Çутĕç работникĕсемшĕн халĕ вĕренӳ çулĕн программине ăнăçлăн вĕçлес, вĕреннĕ материала тепĕр хут тарăннăн аса илсе тухас, çапла майпа вĕренекенсем çулталăк хушшинче илнĕ пĕлĕве тĕрĕслеме лайăх хатĕрленсе çитес задачăран кирлĕрех задача урăх çук.

Республикăра малта пыракан шкулсемпе педагогика коллективĕсем, учительсем вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренӳ çулĕн итогĕсене тума хатĕрленеççĕ.

Вăрçă кӳнĕ йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерсе, республикăри шкулсен пысăк пайĕ 1942—43-мĕш вĕренӳ çулĕн программине ăнăçлăн вĕçлет.

Вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлес, вĕренекенсене тарăн пĕлӳ парас ĕçсен пахалăхне вĕреннĕ материала организованно аса илсе тухни, пĕлӳ тĕрĕслевĕсене лайăх хатĕрленсе ирттерни татса парать. Çакна асра тытса, Комсомольски, Вăрмар тата ытти хăшпĕр районсенчи шкулсенче çĕнĕ материала вĕрентнипе пĕр вăхăтрах вĕреннине аса илес ĕçе те йĕркеллĕ туса пыраççĕ. Шăмăршă вăтам шкулĕнчи математика преподавателĕ Калашников, истори преподавателĕ Лебедева юлташсем ку тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Унта математикăна начар пĕлекен вĕренекенсем пачах çук. Шупашкарти вăтам шкулсенче вĕреннĕ материала аса илес ĕçе лайăх организациленĕ, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман ачасемпе уйрăм занятисем ирттереççĕ.

Анчах пĕлӳ тĕрĕслевне Шупашкар, Пăрачкав тата ытти хăшпĕр районсенчи шкулсем çителĕксĕр хатĕрленеççĕ-ха.

Хăшпĕр учительсем, вĕренӳ программи вĕçленессе шанса, юлашки вăхăтра вĕрентӳ ĕçне вайсăрлатни палăрать. «Эпир çĕнĕ материала тĕплĕн вĕрентнĕ, çавăнпа вĕреннĕ материала аса илсе тухасси çине ытлашши нумай çавăрăнса пăхмасан та юрĕ-ха», текен шухăшсем пысăк йăнăш тăваççĕ. Вĕреннĕ материала аса илес тĕлĕшпе ирттерекен уроксене ӳрĕк-сӳрĕк, ячĕшĕн çеç ирттерни пулмалла мар. Вĕренннине аса илмелли уроксене ирттернĕ чухне учителĕн класс çинчен çеç мар, кашни вĕренекен çинчен те тĕплĕн пĕлсе тăрас пулать. Вĕренекенсем хăш темăпа çителĕксĕр ăнланнă, вĕсемшĕн мĕнле ыйту йывăртарах т. ыт. те — çавсем çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать.

РСФСР Наркомпросĕ пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ирттермелли инструкци кăларнă. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçламĕш шкулăн 4-мĕш класĕнчен пуçласа ытти пур классенче те пулса иртмелле. Пуçламĕш шкулăн I, II тата III-мĕш класĕсенче вĕренекенсене çулталăкри паллăсем тăрăх аслăрах классене куçарас е çав класрах тепĕр çул вĕренме хăварас ыйтăва педагогика совечĕ татса парать. Вĕренӳ программинче тĕп вырăн йышăнакан виçĕ предметпа «начар» паллă илнĕ вĕренекенсене пĕлӳ тĕрĕслевĕсене кĕртмеççĕ, вĕсене çав класрах тепĕр çуллăха хăвараççĕ.

Учителĕн класра пĕлӳ тĕрĕслевĕсем çинчен каласа панă чухне вĕренекенсем тăван çĕршыв тата фронтри юлташсем умĕнче ответлă пулнине туйтармалла, вĕсене вĕренӳ çулĕ вĕçлениччченхи тапхăрта нихăçанхинчен те хастарлăрах ĕçлеме вĕрентмелле. Кăçал пирĕн ĕлкĕрсе пыраймаан е çав класах юлнă пĕр вĕренекен те ан пултăр, — çак задачăна пурнăçласшăн çине тăрса кĕрешмелле те ĕнтĕ халĕ çутĕç работникĕсен, шкул директорĕсемпе заведующийĕсен, партипе комсомолăн шкулсенчи организацисен тата мĕн пур учительсен.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Шкул работникĕсен тĕрĕслеве хатĕрленес ĕçсене—расписани тăвас, пĕлĕве тĕрĕслемелли билетсем хатĕрлес, пĕлӳ тĕрĕслевĕсем хăш класра мĕнле предметсемпе пуласси çинчен тата тĕрĕслевĕн йĕркине вĕренекенсене ăнлантарса парас, ассистентсем уйăрас ĕçсене пуçăнас пулать. Уйрăмах VII-мĕшпе X-мĕш классенче вĕренекенсен пĕлĕвĕсене тĕрĕслес ĕçе ăнăçлăн ирттересси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Тĕрĕслевĕн требованийĕсене нимĕн чухлĕ те чакармалла мар. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсене хатĕрленме вĕренекенсене лайăх условисем туса памалла. Малта пыракан шкулсем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене хатĕрлесе ирттернĕ вăхăтра вĕренекенсене вĕри апат çитерес ĕçе организацилеме шутлаççĕ. Вĕсен примерне пур шкулсен те йышăнмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 19-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Кубань çинче пĕр соединенин чаçĕсем тем пулсан та ăнăçусем тăвас тесе хăтланакан тăшманăн хаяр атакисене сире-сире пăрахнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен штурмлакан колоннисене çывăха ярса вĕсем çине пур йышши хĕçпăшалсенчен те пенĕ. Тĕрлĕ участоксенче штык вĕççĕн те тăрса çапăçнă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе пăрахса, тăшман пехотине икĕ батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Енерхи пекех, çав участокра нимĕç авиацийĕн пысăк вăйĕсем çапăçнă. Пĕр кун хушшинче пирĕн истребительсем тăшманăн 13 самолетне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне нимĕçсен 4 самолетне зенитнăй артиллери персе ӳкернĕ. Пĕтĕмĕшпе 17 самолет пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 7 самолетне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче тăшмана хирĕç перкелесе тăнă. Артиллерирен тата пехота хĕçпăшалĕнчен персе, пирĕн чаçсем тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 2 миномет батарейине пусарнă.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пирĕн разведчиксен группи тăшман тăракан вырăна çитсе траншейăсене кĕрсе кайнă та, унта пулнă гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен пулеметне, минометне тата винтовкисене илсе, разведчикисем хăйсен чаçне тавăрăннă. Совет летчикĕсем тăшман тылĕнчи чугунçулăн пысăк станцине вĕçсе пырса тапăннă. 13 чугунçул эшелонне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, çулйĕре тата складсене аркатнă. Вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре кĕçĕн лейтенант Махнев тата старшина Гостев командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсем засада тунă. Засада тунă вырăна нимĕçсем пырса çитсен, пирĕн боецсем пăшалсемпе пулеметсенчен пеме пуçланă. 25 гитлеровеца вĕлернĕ. Нимĕçсен 3 унтер-офицерне тата 2 салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизан отрячĕсен группи тăшманăн карательнăй экспедицине хирĕç пынă хаяр çапăçусенче нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, партизансем 2 кĕпере сирпĕнтернĕ, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен фронт еннелле каякан чугунçул эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 98-мĕш пехотнăй дивизийĕн уйрăм батальонĕнчи 4-мĕш ротаран Хĕвеланăç фронтĕнче тыткăна лекнĕ ефрейтор Эрнст Мюллер çапла каласа панă: «Пĕтĕм март уйăхĕ тăршшĕпех 98-мĕш дивизи çапăçусем туса каялла чакса пычĕ, пысăк территори хăварчĕ. Пĕтĕм çул тăршшĕпех, Карпишево ялĕнчен пуçласа эпĕ тыткăна лекнĕ Сидоровичи ялне çитиччченех, пирĕн батальонри салтаксем халăх пурăнакан пунктсене нумайĕшне тĕпĕ-йĕрĕпех çунтарса ячĕç. Мартăн 5-мĕшĕнче Карпишево ялне çунтарса ячĕç. Вут тĕртме хушакан приказа батальон командирĕ майор Кюбель пачĕ. Тепĕр икĕ кунтан пирĕн подразделенисем Прудки тата Знаменка ялĕсене çунтарса ячĕç. Чакса пынăçемĕн, офицерсем панă приказ тăрăх, Суботники, Сельцо тата Сидоровичи ялĕсене çунтарса янă. Çуртсене вут тĕртнĕ чухне салтаксем ун çинчен пурăнакан çынсене нихăçан та пĕлтермен. Час-часах çынсем, çухалса кайнипе, çунма пуçланă çуртсенчен тухса тарма тата ачасене çăлма пултарайман».

* * *

Ленинград облаçĕнчи нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă ялçыннисем гитлеровецсен çав тери тискер ĕçĕсем çинчен каласа панă. Пески ялĕнче нимĕçсен фашистла çынвĕлеренĕсем Иван Морозов колхозника çакса вĕлернĕ, унăн çуртне çунтарса янă, мĕншĕн тесен, вăл хăйĕн хĕрне ăна пусмăрлас текен нимĕç офицерĕнчен пытарнă. 16 çулхи хĕр Настя Земскова ун çумне çыхланакан нимĕç офицерне çапса ярса çапла каланă: «Сысна пĕлĕте курайман пекех, эсир те Мускава та Ленинграда та кураймăр» тенĕ. Гитлеровецсем çав хĕре тытнă та таçта илсе кайнă. Çавăн хыççăн вăл хĕр çинчен ним сас-хура та çук. Черный Ручей ялĕнче нимĕçсем оккупацилеччен 250 çын пурăннă. 100 ытла çынна нимĕçсем Германие каторгăна хăваласа кайнă. Темиçе вуншар мирлĕ çынсене гитлеровецсем асаплантарса пере-пере пăрахнă. Колхозниксемпе колхозницăсенчен нумайĕшĕ выçăпа тата хурлăх курнипе вилсе пĕтнĕ. Хальхи вăхăтра ялта 39 çын кăна юлнă.

Апрелĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 20-мĕшĕ ыран тĕне чух çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Кубань çинче тăшманăн танксем хушса вăйлатнă пехотин пĕр полкĕ çĕрле пĕр гварди подразделенийĕн позицийĕсене атакăланă. Вăл участокра йышлăрах пулнă нимĕçсем пирĕн боевой ретсем хушшине шăтарса кĕме пултарнă. Татăклă контратака тунă хыççăн гвардеецсем гитлеровецсене çĕмĕрсе каялла чакарнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе тата штык вĕççĕн çапăçса, нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн 4 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕç салтакĕсен отрячĕ пирĕн позицисем патне пыма хăтланнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе, гитлеровецсен пĕр пайне сапаласа янă, тепĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Пĕр подразделенин снайперĕсем нимĕçсен 38 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Старши сержант Карамирза Джаватханов, вунă кун хушшинче 17 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра тăшман пирĕн оборонăна шăтарса кĕме хăтланнă. Тĕрлĕ хĕçпăшалсенчен персе, совет боецĕсем нимĕçсене пысăк çухатусем кӳнĕ, вĕсене каялла чакарнă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 100 çити вилли выртса юлнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн чаçсем тăшман çине персе тăнă. Пĕр участокра пирĕн артиллери тăшман артиллерийĕн икĕ батарейине тата нимĕç пехотин пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă. Капитан Добровольский командир пулса ертсе пыракан подразделенири снайпер юлашки кунсенче 80 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

Нимĕç самолечĕсен группи пирĕн пĕр объекта тапăнма хăтланнă. Пирĕн зенитнăй артиллери тăшман самолечĕсене сапаласа янă, вĕсем вара бомбăсене ăçта килчĕ унта ăнăçсăррăн пăрахнă. Майор Опахов тата капитан Иващенко командир пулса ертсе пыракан подразделенири зенитчиксем нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Щорс ячĕпе хисепленекен отрячĕ засадăра пытанса нимĕç пехоти çине пенĕ. Пăшалсемпе пулеметсенчен пенипе совет патриочĕсем тăшманăн 60 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр отрядри партизансем апрелĕн 10-мĕшĕнче чугунçул çине минăсем лартса тухнă. Минăсем сирпĕннипе тăшманăн çав çулпа пыракан поездне крушени пулнă.

* * *

Нимĕç армийĕнчен тыткăна лекнĕ поляк салтакĕсем гитлерла тискерсем Польша халăхне пĕтерсе пыни çинчен пĕлтереççĕ. Нимĕçсен 161-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 336-мĕш полкран тыткăна лекнĕ Роман Саботинский çапла каласа панă: «Бродницы (Поморье) хулинче пурăнакан нумай çынсене нимĕçсем персе пăрахрĕç. Вĕсем бургомистр Блокузана, общество деятельне Березовские тата интеллигенцин ытти представителĕсене те асаплантарса вĕлерчĕç. Гимнази директорне тата ытти нумай учительсене те нимĕçсем концентрациллĕ лагерьте асаплантарса вĕлернĕ. Манăн пĕр юлташ (эпĕ ăна фронтра тĕл пултăм) унăн тăван вырăнĕнче пулса иртнĕ юнлă событисем çинчен каласа пачĕ. Каспер ялĕнче тырпула пуçтарса илнĕ хыççăн нимĕç колонисчĕн çурчĕсене тахăшĕ вут тĕртнĕ. Пырса çитнĕ эсэсовецсен отрячĕ Фельхнеровский ксендза тата 10 хресчене арестлесе çавăнтах, пĕтĕм ял куçĕ умĕнчех персе пăрахрĕ. Ирĕксĕрлесе нимĕç армине мобилизациленĕ поляксем тăван çĕршывран хуйхăллă çырусем илеççĕ. Кашни çырура тенĕ пекех гестаповецсем персе вĕлернĕ е нимĕçсен концентрациллĕ лагерĕсенче çĕрсе кайнă е тата Германи каторгинче асапланса вилнĕ тăвансемпе хурăнташсем çинчен пĕлтереççĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тунă çав тери тискер преступленисем çинчен çĕнĕ пĕлтерӳсем илнĕ. Нумаях пулмасть Витебск облаçĕнчи Ниски ялĕ çывăхĕнче нимĕç салтакĕн виллине тупнă пулнă. Гитлеровецсем яла пĕтерсе çĕрпе танлаштарнă тата ялти 256 çынна пурне те вĕлерсе пĕтернĕ, вĕлернисем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем нумай пулнă.

ТАСС пĕлтерни

ТАСС хăй ыйтса пĕлнĕ тăрăх çапла калама пултарать: Польшăн нациллĕ оборона министерствин провокациллĕ пĕлтерĕвĕ пирки апрелĕн 18-мĕшĕнче «Правда» хаçатра пичетленнĕ умстатья — «Гитлерăн Польшăри сотрудникĕсем» ятлăскер — советсен ертсе пыракан ушкăнĕсен позицине çак ыйтупа пĕтĕмпех палăртать.

Апрелĕн 18-мĕшĕнче çав ыйтупах Сикорский господинăн правительстви тунă заявлени ĕçе лайăхлатма мар, ăна пăсса хурать, мĕншĕн тесен вăл Польшăн нациллĕ оборона министерствин асăннă провокациллĕ пĕлтерĕвĕпе килĕшет, çав майпа вара нимĕç оккупанчĕсене вырăспа поляк халăхĕсене хирĕç тăвакан хăйсен преступленийĕсене пытарма пулăшать.

Совета хирĕçле кампани нимĕç пичечĕпе поляк пичетĕнче пĕр вăхăтрах пуçланни вăл пĕр йĕрпех пыни, — çак тĕлĕнмелле факт совета хирĕçле асăннă кампани нимĕç оккупанчĕсем Сикорский господинăн министерстви тавраш... гитлерла элементсемпе малтанах каварлашса хунă хыççăн пуçланнă, тесе шутлама май парать.

Польша правительстви тунă заявлени Гитлер майлă элементсем Польша правительстви тавраш... паллă вырăн йышăнса тăни çинчен, Польшăпа СССР хушшинчи çыхăнăва пăсас тĕлĕшпе вĕсем çĕнĕ утăмсем туни çинчен пĕлтерет.

Финанс работникĕсен ĕçри çĕкленĕвĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăрту финанс ĕçĕнче çитĕнӳсем тума пулăшрĕ. Район пĕррмĕш кварталти плана 120,5 процент тултарчĕ, вăл шутра—военнăй налог пухмалли плана 123,2 процент, колхозсенчен илекен подоходнăй налог пухмалли плана 120 процент, самообложени пухмалли плана 123,5 процент тултарчĕ.

Финагентсенчен уйрăмах Козлов, Долгова тата Ермошкина юлташсем лайăх ĕçлерĕç. Липовка ялсовечĕ (финагент Козлов) пĕтĕм плана 164,9 процент, военнăй налог пухас енĕпе—188,5 процент тултарчĕ. Нăрваш Шăхаль ялсовечĕ (финагент Долгова) пĕтĕм плана 148,9 процент, военнăй налог пухас енĕпе—157,9 процент тултарчĕ.

Районра финанс работникĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Финанс работникĕсем канашлура Май уявне финанс ĕçĕнчи çĕнĕ çитĕнӳсем пе кĕтсе илме обязательствăсем илчĕç.

В. Краснов,
Райфинотделăн главнăй бухгалтерĕ.

Пĕр çу хушшинче тулă икĕ хут акса ӳстерме пулать

Ереванри ялхуçалăх институчĕн профессорĕ Туман выранти тусенче ӳсекен тулă сорчĕсенчен хăвăрт пулса çитекен сортсене суйласа тупнă. Вăл сортсем яланхи 90—100 кун вырăнне 69—70 кунта пулса çитеççĕ. Июль уйăхĕн пуçламĕшĕнче Арменире иккĕмĕш хут тулă акма пулать, кĕркунне вырса илме пулать. Çав тулă вăтамран гектар çинче 15 центнер тухать.

Республикăри 10 колхозра çак тĕлĕшпе массăллă опытсем тума пысăк çĕр участокĕсем уйăрса хунă. (ТАСС).

Çураки вăхăтĕнче ялхуçалăх машинисемпе туллин усă курар!

Тырра сеялкăсемпе акма тăрăшатпăр

ЕЛЧĔК, апрелĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Уйрăм участоксене суйласа илсе районри колхозсем çураки ĕçĕсене анлăн сарса пыраççĕ. Çуракине вăхăтра тухса, колхозсем ĕçе пысăк пахалăхпа тăвассишĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Тырра сеялкăсемпе акасси малтанхи кунах тĕп вырăн йышăнчĕ. Йĕркесĕр васкаса тырра алăпа акассине эпир пăрахăçлатпăр. Участоксем типсе пынă май тырра сеялкăсемпе акма тăрăшатпăр.

Çураки ĕçĕсем халь районри 48 колхозра пыраççĕ. Тырă акма пурĕ 160 гектар çĕр хатĕрленĕ, 807 гектар çине акнă. Анчах тăпра нӳрĕреххе. Кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене культиваци туса хатĕрленĕ пулсан та, унта халĕ сеялкăпа акма çук-ха. Çăмăрлă кунсем тырă акас ĕçе кăштах чарчĕç. Алăпа акма пулать ĕнтĕ, анчах сеялкăсем ахаль тăнă çĕртех алăпа акса тăкнин усси пулмасть. Колхозниксем тырра сеялкăсемпех акса ĕлкĕрме шутлаççĕ.

Сеялкăсем пирĕн районра çителĕклĕ. Трактор сеялкисем 29, колхозсен хăйсен 170 сеялка. Пурте ĕçе хатĕр. Вĕсемпе акара туллин усă курмалла. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз паянхи куна пурĕ 40 гектар, «КИМ» колхоз—45 гектар тырă акнă. Пурне те сеялкăсемпе акрĕç.

Вăрлăха яровизацилесе акассине те колхозниксем пысăк хак параççĕ. Халĕ пурĕ 2.720 центнер вăрлăха яровизацилеме хунă.

Паян район кок-сагыз акмалли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕ. Кашни колхозрах çуракинче ĕçлекенсем валли столовăй уçнă, ĕçлекенсене талăкра икĕ хут апат çитереççĕ.

И. Степанов.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Кок-сагыза академик Лысенко кăтартнă пек акаççĕ

Малта пыракан колхозсем кок-сагыза акрĕç те ĕнтĕ. Чкаловски районри тăватă колхоз: Сталин, Крупская, Киров ячĕсемпе тăракан колхозсем тата «Красное знамя» колхоз малтанхи хут кок-сагыз академик Лысенко юлташăн çĕнĕ меслечĕпе акрĕç.

Академик Т. Д. Лысенко колхозсене кок-сагыз акса ӳстермелли çĕнĕ май кăтартса пачĕ. Кок-сагыз вăрлăхĕ вĕтĕ пулсан, пĕр гектара вăрлăх 1,5 килограмм чухлĕ çеç кирлĕ. Лысенко академик кок-сагыза ал вĕççĕн тĕмĕн-тĕмĕн лартма хушать. Акма кирлĕ чухлĕ виçсе илнĕ вăрлăхăн кашни килограмне аласа илнĕ пĕр центнер хура тăпрапа хутăштараççĕ. Хура тăпра ытлашши типĕ те, ытлашши нӳрĕ те пулмалла мар. Чух нӳрĕ тăпрапа вăрлăха хутăштарнă хыççăн ăна пĕрер тĕпчемĕн илсе хатĕрлесе çитернĕ участок çине ретлĕн лартаççĕ. Кашни тĕпчĕмре кок-сагыз вăрлăхĕ вуннăна çити пулма пултарать. Çапла вăл пĕр çĕре выртса юлса кок-сагыз тĕмĕн-тĕмĕн ӳсет. Тĕмсем хушши 30 сантиметр, ретсен хушши 60 сантиметр пулмалла.

Кок-сагыза Лысенко академикăн çĕнĕ кăтартăвĕ тăрăх лартсан, вăрлăх лайăх шăтса тухни куранать тата кайран ăна кăпкалатса тăма, апат пама лайăхрах, тымарне пухнă чухне те ĕç вăйне перекетлеме май парать.

Комсомольски районра та «Культура», «Светлая жизнь» колхозсем Лысенко академикăн çĕнĕ кăтартăвĕ тăрăх 9 гектар кок-сагыз акнă.

И. Ефимов.

Çуракине тухас умĕн

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Çуракине тухас умĕнхи вăхăтпа туллин усă курса, районри колхозсем кĕрхи тырăсен калчисене удобрени парас ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Паянхи куна пурĕ 1341 гектар çинчи калчасем çине вырăнти тата минераллă удобренисем кăларнă. Вырăнти удобренисемпе анлăн усă курса, Сталин ячĕпе тăракан колхоз планран ирттерсе 15 гектар, «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз 8 гектар çинчи кĕрхи тырăсем çине удобренисем кăларчĕç. Чылай колхозсем кĕрхи тырăсем çине клевер акса хăварас плана ăнăçлăн тултарчĕç.

Енер уйрăм участоксене суйласа илсе суха тума районра чи малтан «Радио», «Большевик», «Клевер» тата «Коминтерн» колхозсем тухрĕç.

П. Никитин.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВАРМАР, апрелĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян районри пур колхозсем те уйрăм участоксене суйласа илсе суха тума тухрĕç. «Свет» колхоз 10 гектар сухаларĕ, 5 гектар çине сĕлĕ акрĕ.

Çуракине тухас умĕнхи вăхăтпа колхозсем кĕрхи тырăсем çине клевер акса хăварас тата кĕрхи тырă калчисем çине удобренисем кăларас тĕлĕшпе туллин усă курчĕç. «Дружба» колхоз членĕсем кĕрхи тырăсем çине удобрени кăларас ĕçе тăрăшса туса пычĕç. Кунта пурĕ 200 гектар çинчи калчасене тислĕк шывĕпе тата минераллă удобрени хурса çемçетнĕ.

МТС-ăн трактор бригадисем çуракине тухма хатĕрленеççĕ. Инçетри участоксенче ĕçлекен бригадăсем вырăна çитнĕ, ĕçе тухма хатĕр тăраççĕ.

А. Смирнов,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КАЛИНИНО, апрелĕн 19-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Сталин ячĕпе тăракан колхоз çуракине уйрăм участоксене суйласа илсе, паянхи куна 64 гектар сухаларĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ĕçе хастарлăн, хăвăрт туса пыраççĕ. Колхозăн 4 бригади те уйра иртен пуçласа каç пуличченех ĕçлеççĕ.

Сухаçă-хĕрарăмсем лайăх ĕçлеççĕ. Анна Петрова талăкри ĕç нормине 130 процент, Вера Васильева 110 процент, Екатерина Килова 105 процент тултараççĕ.

Лашасене начар пăхаççĕ

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). Лаша вăйĕ пĕтĕм ĕçе татса парать. Çавăнпа та лашасене лайăх пăхмалла. Витесене кашни кунах тасатмалла.

Хăмăшри Папанин ячĕпе тăракан колхозра çакна манса кайнă. Лашасене унта питĕ япăх пăхаççĕ, вĕсене тасатмаççĕ, витери тислĕке кашни кун кăлармаççĕ, çавăнпа унта тислĕк çăрăлса тăрать. Лашасем тăракан пӳлĕмсенче урай хăмисем ишĕлсе аннă, çĕрсе татăла-татăла пĕтнĕ. Тихаллă кĕсресем çур метр хулăмĕш тислĕклĕ пӳлĕмсенче тăраççĕ.

Тислĕке мĕншĕн кашни кунах тасатмастăр? тесе ыйтрăмăр эпир конюхсенчен. Вĕсем çапла ответлерĕç: мĕншĕн тесен урай хăмисем çук, тата эпир кашни кунах лашасен айне улăм сарса пыратпăр, çавăнпа тислĕк хулăмланса каять, терĕç.

Конюхсем хушшинче ĕçе кирлĕ пек организацилемен тата кашни конюха миçе лаша пăхмаллине кăтартса паман. Конюхсем лашасене мĕнле килчĕ çавăн пек пăхаççĕ, лашасемшĕн ответлă пулса тăмаççĕ. Колхоз председателĕ Ф. Львов юлташ çапла калать: «Конюхсем эпĕ каланине итлемеççĕ, каласан манран тăрăхласа кулаççĕ», тет.

Конюхсем пурте хĕрарăмсем. Паллах ĕнтĕ, вĕсене кашни кунах пулăшса пымалла, вĕсемпе уйрăм калаçусем туса ирттермелле. Çакна тума колхозра вăй пур. Унта 8 комсомолец тата пĕр коммунист пур. Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Скворцов юлташ та, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Степанова юлташ та, çав колхозрах пурăнаççĕ. Вĕсем кайнă чух та, килнĕ чух та лаша витисем умĕнчен иртсе каяççĕ, анчах та лашасене мĕнле пăхнипе интересленмеççĕ. Лашасем колхозăн начар. Транспорт инвентарĕсем те унтакунта сапаланса выртаççĕ. Çак йĕркесĕрлĕхсене халех пĕтермелле.

С. Шадин.

Фронтовиксен çемьисене пулăшатпăр

ШАХАСАН. Чулкăмака ялсоветĕнчи колхоз членĕсем фронтовиксен çемьисемпе эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсем валли 4 центнер çĕрулми, 20 килограмм купăста, 8 килограмм сухан пухрĕç. Кунсăр пуçне колхоз пулăшу кассинчен 5 центнер çĕрулми, 5 центнер тулă, пĕр центнер пăрçа тата купăста уйăрса пачĕ. Эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсене 10 сысна çури сутнă.

А. Федоров.

Пирĕн земляксем

Летчик Сергей Воробьев

Акă вăл Аслă Октябрь тивлечĕпе хурçă çунатсем туяннă чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ.

Шупашкар районĕнчи Хучахмат ялĕнче 1917 çулта çуралса, тăван ашшĕнчен тăватă çулта чухне тăлăха юлнăскер, çĕршыв пулăшнипе çамрăклах анлă пурнăç çулĕ çине тухнă. Вăрçăччен вăл ытлашши нимĕн енчен те палăрса тăман. Туллимар вăтам шкул пĕтернӗ, пĕр çул хушши Шупашкар типографийĕ çумĕнчи ФЗО шкулĕнче вĕреннĕ. 1934—1938 çулсенче редакцире корректор пулса ĕçленĕ. Çирĕп, сывлăхлă, çутă ĕмĕтлĕ каччă типографире ĕçленĕ вăхăтрах çĕршыва хӳтĕлекен çын пулма хатĕрленнĕ — аэроклуба вĕренме çӳренĕ. Унтан—летчиксен шкулĕ. Вĕренӳ çулĕсем. 1939 çулхи лару-тăрусене пула, пĕр вăхăтлăха вĕренĕве хăварма тивет. Вăл хăй ирĕкĕпе стрелок-радист пулса белофинсене хирĕç кĕрешме тухса каять. Белофинсене аркатса тăкнă хыççăн вĕренĕве малалла тăсать. 1940 çулта кĕçĕн-лейтенант ятне илсе вĕренсе тухать те ăна шкултах инструктор пулса ĕçлеме хăвараççĕ.

Юнĕçен Гитлерăн хура çăханĕсене хирĕç вăл 1942 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа кăçалхи февралĕн 14-мĕшĕччен çапăçать. Дон, Сталинград тата Ростов районĕсенчи хаяр та йывăр çапăçусенче пулса пиçĕхет. Вăл 217 хутчен боевой вĕçевре пулнă. Çав вăхăтра тăшманăн нумай машинисемпе хĕçпăшалне, чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкать. Командованин приказĕсене тӳрĕ кăмăлпа, вăхăтра тата нимĕнле йывăрлăхсенчен хăрамасăр пурнăçа кĕртет.

Маттур летчикăн боевой пурнăçĕнче мухтава тивĕç ĕçсем темĕн чухлех. Кăçалхи январĕн 25-мĕшĕнче полк командованийĕ Сергей Андреевич Воробьевăн экипажне фронтăн П. участокĕнче пухăнса тăнă тăшман войскисемпе техникине разведка тума приказ панă. Воробьев юлташ, санталăк питĕ начар пулнă пулин те, самолет çине ларса разведкăна тухса кайнă. Паттăр летчика тăшмансем зенитнăй пулеметран вăйлăн персе тăнипе кĕтсе илнĕ. Пирĕн паттăр земляк хирĕç пенĕ. Темĕн пек йывăр пулсан та, вăл хăйĕн чăсне задание отлично пурнăçласа таврăннă. Тăшман çинчен питех те хаклă сведенисем пухса килнĕ. Унăн самолечĕ хамăрăн аэродром çине анса ларсан, юлташĕсем çакна палăртнă: фашистсем Воробьев юлташăн самолетне 46 çĕртен персе шăтарнă.

Тепĕр икĕ кунран—январĕн 27-мĕшĕнче пирĕн паттăр земляк каллех разведкăра пулнă. Ку расра ăна «Хейнкель-111» йышши самолетсен ушкăнĕпе кĕрешме тивнĕ. Вĕсем хăюллă разведчикăн пурнăçне татасшăн çуннă. Тăшман самолечĕсем çине летчик вилĕм çăмăрĕ тăкнă. Вăл нумай вăй хурса, пĕлсе маневр туса вĕсенчен хăтăлнă та задание пурнăçланă.

Гвардин кĕçĕн лейтенанчĕ, чăваш халăхĕн хăюллă ывăлĕ-летчик Сергей Андреевич Воробьев ĕçне Правительство тивĕçлипе хакларĕ. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан çапăçу фрончĕсенче геройлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă.

П. НИКОЛАЕВ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

15. Вырăс хăярĕ

Хирĕ пирĕн — çивчĕ куçлă,
Пин хăлхаллă — сĕм вăрман.
Тăшман упăм ярса пуснă —
Ана сисчĕ партизан.

Кăç пулсассăн хыпар çитрĕ
Хамăр партизансенчен:
— Ĕç пур кĕçĕр, хăхĕм пит те,
Авалхи Н. хулинче.

Самант меллĕ-çке ытла та,
Ун пекки часах ан кĕт.
Нимĕçсем тума шутланă
Раштав ячĕпе банкет.

Авалхи дворецăн залĕ
Усĕр мухăпа кĕрлет.
Пĕтĕм ирсĕрĕ-усалĕ
Кĕçĕр пухăннă пĕрле.

Варрине çут чăраш лартнă,
Çимĕçсем сĕтел тулли.
Сахал мар, вĕсем çаратнă,
Çав ĕнтĕ вĕсен йăли.

Савăнать, çиет, мур-нимĕç.
Анчах чаплă елкăна
Çитеймест иккен пĕр çимĕç,
Çитеймест «хăяр» кăна.

Вырăссен шултăра хăярĕ
Кирлĕ, ӳсĕр нимĕçе.
Вĕçсе кай, Орлов, вăр-варрăн
«Хăяр-çимĕç» тиесе.

Кĕттермерĕ пирĕн паттăр,
Тухрĕ хăвăрттăн вĕçсе.
«Хăяр» кăшт тăварлăрах та,
Ан ӳпкелĕр, нимĕçсем!

Сывлăша çурса вĕçевçĕ
Сĕм каç витĕр çул хывать.
Тăван çĕрĕн çак кĕтесĕ
Питĕ паллă Орлова.

Кунта ĕлĕк Невский пухнă
Хăйĕн вилĕмсĕр çарне.
Çакăнтан вăрçа вăл тухнă
Сыхлама тăван çĕрне.

Йытă-рыцарьсене хирĕç
Тăнă пирĕн паттăрсем.
Вилĕм тупнă сĕмсĕр нимĕç
Чĕррĕн пăр айне кĕрсе.

Халĕ те çав ирсĕр, сăхă
Тăшман курмĕ ыррине.
Александр Невский йăхĕ
Тухрĕ нимĕçсем çине.

Сывлăша çурса вĕçевçĕ
Сĕм каç витĕр çул хывать.
Тăван çĕрĕн çак кĕтесĕ
Чун пек паллă Орлова.

Хăй çул тытнă хулара та
Вăл паллать кашни çурта.
Штурмăна калать: — Куратăн,
Ав аçта тĕллев выртать.

Ĕлĕк ларнă вăл мăнаçлăн —
Авалхи кервен дворец.
Халь унта тăшман вырнаçнă,
Ана шелсĕр пĕтерес!

Вĕçсе пычĕ ăмăрткайăк
Çывăхрах, аяларах.
Халь ĕнтĕ «сĕнмешкĕн» лайăх
Шар-тăварлă «хăяра».

Авалхи çурт çийĕ витĕр,
Ташлатса нимĕçсене,
«Хăярсем» тĕл ӳкрĕç питĕ —
Шăп çавра сĕтел çине.

— Мейĕр, çийĕр те çырлахăр, —
Акă «çимĕç» вăркăнать. —
Ытлашши ятламăр ахăр,
Кучченеçĕ çав кăна!

Нумайччен Орлов ĕçлерĕ,
«Хăналарĕ» нимĕçе.
Вăл пĕрре те шеллемерĕ
Ырă, сиплĕ «çимĕçе».

Çавтери аван ĕç пулчĕ,
Сыпăçуллă темелле.
Çуртран кĕл çеç тăрса юлчĕ,
Çурт танлашрĕ çĕрпеле.

Орлов туйрĕ çăмăлраххăн,
Халь юрать киле кайма.
Анчах çакă вăл çапах-ха
Тавăру сехечĕ мар.

Вĕресе тăран хаярлăх
Ĕмĕрне ан сивĕнтĕр.
Саншăн, капитан Гастелло,
Саншăн, аслă тăван çĕр!

Моторсем юрлаççĕ юрă,
Çав юрра итлет тĕнче.
Тепĕр кун хыпар фронт урлă
Килчĕ партизансенчен:

— Кирлине туянчĕ нимĕç,
Летчик килнĕ каçхине
Кунта çĕр те вăтăр иккĕш
Тупрĕç вилĕмĕсене.

Тата лăпăр-лапăр мар çав, —
Пурте пулнă — офицер.
Летчик вĕсенне хăварчĕ
Мухмăрĕсене чĕртсех.

(Малалли пулать).

(Малалли. Поэма 61-мĕш номĕртен пичетленме пуçланă).

Ют çĕршывсенче

СТРАБОЛДЖИ ТУХСА КАЛАНĂ САМАХ

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх Кройдонра пулнă митингра лорд Страболджи сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çакна палăртнă: Хĕвеланăç Европăра англичансемпе американецсен анлă наступление пуçласа ярассине Бизертăра юлашки блиндажа тата юлашки çурта тытса иличчен хăварни ытла питĕ асăрханса тăни тата халсăрлăха палăртни пулнă пулĕччĕ. Тăхтаса тăнин кашни эрнинех вăрçă операцийĕсем тума çулталӑкри чи лайăх вăхăта çухатнине пĕлтерет. Малалла Страболджи çапла каланă: оккупациленĕ çĕршывсенчи халăха гитлеровецсем экономика тата шухăш-кăмăл енчен пĕтĕмпех путарса лартиччен, союзниксем континентра тапăнмасан, Европăра çирĕп мир тума май килессине шанмастăп, тенĕ.

УИЛКИ СССР ÇИНЧЕН ÇЫРНĂ КĔНЕКЕ ÇАВТЕРИ ĂНĂÇЛĂН САЛАНАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Нумаях пулмасть США-ра Уилкин «Тĕнче пĕрлĕхлĕ» ятлă кĕнеки тухнă. Вăл кĕнекере Уилки пуринчен ытла Совет Союзĕнче пулса курни-илтнисем çинчен çырнă. Кĕнеке тухни пĕр эрне кăна иртнĕ пулин те, «Саймон тата Шустер» издательсем каланă тăрăх, вăл кĕнекене 370.000 экземпляр сутнă е çавăн чухлĕ илме заказ панă. Америкăра халиччен пĕр кĕнеке те çавăн пек ăнăçлă сутăнман. Апрелĕн 13-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче кăна издательствăна çав кĕнекене 48.000 кĕнеке ыйтса янă. Уилки кĕнекине пурте ырлаççĕ.

Американецсем Совет Союзĕпе интересленни анлăн сарăлса пынине палăртса, провинцири хаçатсем пĕтĕмĕшпех Совет Союзĕ çинчен çырса кăларнă «Лайф» журнал çинчен те ăшшăн çыраççĕ. «Лайф» журналăн пĕтĕм тиражĕ пĕр номер юлмиех сутăнса пĕтнĕ. Нумай магазинсенче пур экземплярсене те темиçе сехет хушшинчех сутса пĕтернĕ.

АМЕРИКĂРИ «ВĂРÇĂРА СОВЕТ СОЮЗНЕ ПУЛĂШМАЛЛИ КОМИТЕТĂН» ĔÇĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Вăрçăра Совет Союзне пулăшмалли комитет» пĕлтернĕ тăрăх, çак çулхи пĕрремĕш кварталта Совет Союзне янă медикаментсемпе ытти материалсен хакĕ 4 миллион доллартан иртсе кайнă.

ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ФРАНЦУЗСЕНЕ ЛАВАЛЬ ГИТЛЕРЛА ЧУРАЛĂХА СУТАТЬ

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германире пурăнакан тыткăна лекнĕ французсене пурне те Лаваль Германи влаçĕсен аллине панă. Тыткăнри пĕр миллион та 200 пин çынтан 250 пин çынна нимĕçсем предприятисем тăрăх валеçсе уйăрса илнĕ те ĕнтĕ. Тыткăна лекнисене ыттисене те çав япалах кĕтет. Пĕтĕм тĕнчери правăна пăхмасăрах, тыткăна лекнисене ĕçрен пăрăнма памаççĕ.

СТИМСОН ТУНИСРИ ÇАПĂÇУСЕМ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министрĕ Стимсон вăрçă лару-тăрăвĕ çинчен пресс-конференцире тухса каласа çакна палăртнă: Çурçĕр Африкăра пыракан кампанин татса паракан тапхăрĕ инçе мар пулас, анчах та тĕнĕл держависен ку районта чылай пысăк вăйсем пур-ха. Çурçĕр Африкăра халĕ нимĕçсемпе итальянецсен войскисем 175—200 пин çынна çитесçĕ пулмалла.

Тăшман халĕ вăйлă позицисем йышăнса тăрать, стратеги енчен паллă районсенче тунă полевой позицисене вăл çирĕплетсе хунă. Кунсăри пуçне тăшманăн питĕ лайăх икĕ гавань пур тата вуншар аэродромсем пур. Апат-çимĕçпе горючи енчен тăшманăн ĕçсем епле пулни паллă мар, анчах та тĕрлĕ материалсем илсе пыма тăрăшни тăшман хăйĕн сыхăну çулĕсене тытса тăма хăтланни çинчен пĕлтереççĕ.

Ку таранччен, тенĕ Стимсон, тăшман хăйĕн войскисене массăллăн эвакуацилеме хăтланни палăрмасть-ха. Самолетсем унăн войскисем валли тĕрлĕ хатĕрсем илсе пыраççĕ тата аманнисене илсе каяççĕ.

Стимсон сывлăш тăрăх тата тинĕс урлă темиçе эрне хушшинче эвакуацилеме май пуррине паллă тунă. Тĕнĕл держависем вăхăта май килнĕ таран ытларах тăсма тата союзниксене пысăк çухатусем кӳме шут тытма пултараççĕ, тенĕ вăл. Вĕсем çапла тунипе хăйсен Çурçĕр Африкăри войскисен тĕп массине çухатас пулсан та вăл шухăша пурнăçлама тăрăшĕç. Союзниксен войскисем çĕр çинче те, сывлăшра та вăйлăрах пулнипе вĕсем тĕнĕл держависен войскисене çапса пыраççĕ тата чи вăйлă тапхăра çитекен наступление пĕрлешсе туса пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ Германин тата вăл оккупациленĕ çĕршывсен промышленноçпа транспорт центрĕсене вĕçсе пырса тапăнасси тата Англи базисем çинчен пырса вăйлăн бомбăсем пăрахасси, тенĕ Стимсон, малашне татах та вăйланмалла. Сывăхри уйăхсенчех вĕсем Германие хирĕç кĕрешес ĕçре паллă фактор пулса тăмалла, тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин истребительнăй авиацийĕ тăшманăн Францири, Голландири тата Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ обьекчĕсене тапăннă.

Англин йывăр бомбардировщикĕсем Сицилири Катани гаваньне атакăланă. Бомбăсем пристань районĕнче тата электростанци сывăхĕнче çурăлнă.

Американецсен «Вĕçекен крепость» йышши самолечĕсем Ферривилле тата Палермона вăйлăн тапăннă. Портри сооруженисемпе карапсем çине бомбăсем тӳрремĕнех лекнине палăртнă. Сывлăшри çапăçура тăшманăн 17 самолетне персе ӳкернĕ.

СПЕЦИЕ ÇĔНĔРЕН ТАПĂННА

ЛОНДОН, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерствин пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, апрелĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Çурçĕр Италири тинĕс-çар базине-Специе çĕнĕрен вăйлăн пырса тапăннă.

Чугунçулсем çинче çарти пек йĕрке туни çине ответлесе

ÇĔМĔРЛЕ, апрелĕн 19-мĕшĕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Кунти железнодорожниксем СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ чугунçул транспортĕнче çарти пек йĕрке тăвасси çинчен йышăннă Указа ырă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Çав ятпа участоксенче, околоточнăйсенче, железнодорожниксен пухăвĕсенче митингсем пулса иртрĕç.

Пуçтарăннă митингĕнче ремонтнăй рабочи-стахановец Докутин пĕтĕм коллективăн шухăш-кăмăлне пĕлтерсе çапла каларĕ:

— Чугунçул транспортĕнче çарти пек йĕрке туни ĕçри ситменлĕхсене пĕтермелле, ĕçе урĕк-сурĕк тăвакансене хирĕç кĕрешмелли, çĕршыва хӳтĕлекенсем патне хĕçпăшал, апатçимĕç тата çынсем йĕркеллĕ çитерсе тăмалли хăватлă хĕçпăшал пулса тăрĕ. Указ пире, совет железнодорожникĕсене, дисциплинăллă пулма, хамăр ĕçе тăван çĕршыв умĕнчи ответлăха ытларах туйса туса пыма хушать, терĕ.

Станци коллективĕ (начальникĕ Селезнев юлташ) Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса пĕр браксăр ĕçлеме, поездсене график тăрăх йышăнса ăсатма обязательство илнĕччĕ.

Çак кунсенче илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслерĕç. Станцири патриотсем обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Станци дежурнăй коммунист Потапов, стрелочниксем коммунист Табункин тата Смирнова, путеец Чураков Указ тухнăранпа хăйсен ĕçне чылай лайăхрах туса пыма тытăнчĕç. Вĕсем ĕç тухăçлăхне куллен ӳстерсе пыраççĕ.

Х. Лисин.

Производствăри активлăх

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Райпромкомбинат (управляющийĕ Ш. Рахимов) март уйăхĕнчи производство планне 165 процент, 1-мĕш квартал планне 142 процент тултарнă.

Тимĕрçĕ цехĕ (бригадирĕ Староверов) март уйăхĕнчи плана 170 процент тултарнă, ытти ĕçсене тунă хушăрах колхозсен 30 плугне юсанă. Староверов юлташ çамрăк тимĕрçĕсене вĕрентес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлет.

Плотниксен Мельдин юлташ ертсе пыракан бригади те уйăхри плана ытлашшипех тултарса пырать. Урапа кустăрми тăвакансенчен С. Димитриев юлташ хăйĕн ĕçченлĕхне кăтартать. Вăл ир пуçласа сĕм тĕттĕмчченӗх ĕçлет, хăйпе пĕрле 2 çамрăка ĕçлеме вĕрентет.

Черепица заводĕнчи кирпĕч тăвакан мастер Феофанова тата ытти работницăсем нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Кунне 700 кирпĕч тумалла пулсан, вĕсем 750—800 кирпĕч тăваççĕ.

В. Андреев.

Парторганизаци ӳсет

Парти ретне ӳстерессi парти организацийĕсен пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать. Çакна шута илсе ĕçлесе тата отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче ĕççыннисен политикăллă активлăхĕ ӳснипе усă курса, Шăхасан районĕнчи парторганизаци хăйĕн ретне чылай ӳстерчĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа районри парторганизацире ВКП(б) ретне 126 çынна, вăл шутра ВКП(б) членĕн кандидатне 72 çынна илнĕ. Парти ретне çĕнĕ членсем илесси çак çулта уйрăмах вăйланчĕ. 1942 çулта партие районĕпе 61 çынна илнĕ пулсан, 1943 çулти виçĕ уйăх хушшинче кăна 30 çынна илнĕ.

Большевиксен парти ретне фронтра тата тылра хăйсен пултарулăхне кăтартнă, тăван çĕршыва нимĕç фашисчĕсенчен сыхлассишĕн хăйсен пĕтĕм вăйне тата пурнăçне пама хатĕр тăракан, Ленин—Сталин партийĕн ĕçне чĕререн парăннă юлташсем кĕреççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче хуçалăхлă, оборонăллă тата обществăллă ĕçсенче хĕрарăмсен ролĕ ӳснине уйрăмах палăртмалла. 1942 çулта ВКП(б) ретне илнисенчен хĕрарăмсем 33 процент шутланнă, 1943 çулта — 50 процент шутланать. Районри парторганизаци хăйĕн ретне ленинла комсомол членĕсен шутĕнчен те чылай ӳстерсе пырать. Парти ретне илнисенчен комсомолецсем 35 проц.

1943 çулта парти ретне колхоз производствинче малта пыракансем йышлăрах кĕре пуçларĕç. 1942 çулта партие илнисенчен колхозниксем 30 процент, учительсем 18 процент тата ытти служащисем 52 процент пулнă пулсан, 1943 çулта интеллигентсемпе служащисем 47 процент, колхозниксем 53 процент шутланаççĕ. Колхозниксенчен колхоз председателĕсем 4, колхоз председателĕн заместителĕсем, бригадирсем, ферма заведующийĕсем 3, комбайнерсемпе трактористсем 3.

Парти ретне илме ыйтса паракан пур заявленисем те парторганизаци ĕççыннисен массисемпе таччăн сыхăнса тăнине, вăл сыхăну кашни кунах çирĕпленсе пынине, партин авторитечĕ пысăккине кăтартса параççĕ.

Госстрахăн районри инспекцийĕнче бухгалтер пулса ĕçлекен Игнатьева Христина пысăк патриотизмлă заявлени çырса панă.

«Манăн упăшка, ВКП(б) членĕ, нимĕç фашисчĕсемпе пыракан кĕрешӳ фронтĕнче паттăр вилĕмпе вилчĕ. Эпĕ упăшка вырăнне парти ретне кĕрес тесе, мана ВКП(б) членĕн кандидатне илме ыйтатăп. Тăшмана çапса салатассишĕн хамăн вăя шеллемесĕр ĕçлеме пулатăп»,—тет вăл.

Совет патриочĕсем хăйсен большевиксен партийĕн ретне кĕнине фронтшăн стахановла ĕçленипе паллă тăваççĕ.

Иванова Наталия вăрçăччен «Пионер» колхозра колхозница пулса ĕçленĕ. Унăн упăшкине Хĕрлĕ Çар ретне илсен, вăл унăн вырăнне колхозра хуçалăх тата производство заведующинче ĕçлеме пуçлать. Кайран ăна колхоз председателĕн заместительне суйлаççĕ. Хăйĕн ĕçне аван туса пырать. Ырми-канми ĕçлесе колхоз хуçалăхне йĕркеллĕ тытать. Обществăллă ĕçе активлăн хутшăнать. Ана халĕ ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ.

Комсомолка Романова Анна та вăрçă пуçланиччен колхозница пулса ĕçленĕ. Унтан ăна бригадир пулма уйăрса лартаççĕ. Халĕ вăл колхозра кладовщик пулса ĕçлет. Парти ретне кĕме хатĕрленнĕ май çуракине хатĕрленес енĕпе активлăн ĕçлерĕ. Колхозăн мĕнпур вăрлăхĕсене тасатас ĕçе хăй организацилесе ертсе пычĕ. Халĕ вăрлăхсене йăлтах тасатса çитернӗ, лайăх пăхса усрать. Романова юлташа парти членĕн кандидатне илнĕ.

ВКП(б) членĕн кандидачĕ Тихонов Федор отечественнăй аслă вăрçăра пулнă. Иртнĕ çулта Хĕрлĕ Çар ретĕнчен килсенех колхоз председателĕн заместителĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Унтан ăна колхоз председательне суйларĕç. Вăл ертсе пыракан Тельман ячĕпе тăракан колхоз ял хуçалăх ĕçĕсемпе 1942 çулта районра пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Колхоз кăçалхи çуракине февраль уйăхĕнчех пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Ĕççынни депутачĕсен район Совечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне колхоз хăй аллинче тытать. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те колхоз аван ĕçлет. Тихонов юлташа ВКП(б) членне илнĕ.

Парти членĕн кандидатне илнĕ С. Илларионов комбайнерпа Н. Александров тракторист пирки те çавнах каламалла. Вĕсем хăйсен кулленхи пархатарлă ĕçĕпе парти ретĕнче пулма тивĕç илчĕç. Илларионов юлташ 1942 çулта ĕç планне 190 процент тултарнă. Александров юлташ тракторпа ĕçлемелли плана, авăн çапнине шутламасăр, 149 процент пурнăçланă. Унăн пултарулăхне кура кăçал ăна трактор бригадин бригадирне лартнă. Унăн бригади кăçалхи çуракине хатĕрленсе çитнĕ.

ВКП(б) ретне çĕнĕ членсем илессипе Пинерти, Енĕшри, ВКП(б) райкомĕнчи, райсовет исполкомĕнчи, районри финанс пайĕнчи пуçламĕш парторганизацисем аван ĕçлеççĕ. Вăл организацисенче пĕлтĕрпе кăçал парти ретне çĕнĕрен 5—6 çынна илнĕ. Юлашки вăхăтра ку тĕлĕшпе Шуркассинчи пуçламĕш парторганизаци те хăйĕн ĕçне аванлатрĕ.

Парти ретне ӳстерес енĕпе ĕçлемен пуçламĕш парторганизацисем районра 1942 çулта пулман, анчах хăшпĕр организацисем ку тĕлĕшпе начартарах ĕçлерĕç. Атнашри (секретарĕ Степанова юлташ), Чуракассинчи (секретарĕ Ильин юлташ), Чулкăмакари (секретарĕ Андреев юлташ) пуçламĕш парторганизацисем иртнĕ çулталăк хушшинче ВКП(б) ретне пĕрер çын кăна илнĕ. Çакă вăл çав организацисем ялти активпа çителĕксĕр ĕçленинчен, парти ретне ӳстерессипе куллен ĕçлесе пыманнинчен килнĕ.

Çамрăк коммунистсене вĕрентсе ӳстерес ĕç юсанса пырать. Çавна май кандидатра тăмалли стаж иртсе кайнă кандидатсен хисепĕ сахалланчĕ. 1943 çулти январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсен шучĕ 16 çын пулнă пулсан, паянхи куна 11 çынна çити чакнă, çакă вăл парторганизацири кандидатсен 25 процентĕ пулать. Çавăнпа пĕрлех, хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче кандидатсемпе çителĕклĕн ĕçлемеççĕ-ха. Кандидатсен политикăллă пĕлĕвне ӳсме пулăшмаççĕ, партиллĕ-обществăллă ĕçе кирлĕ пек явăçтармаççĕ.

Çĕнĕ Чалкассинчи кандидат группинче тăракан Иванова Пересковья ВКП(б) членĕн кандидатне 1938 çулта кĕнĕ. Вăл ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Ăна партиллĕ-обществăллă ĕçе явăçтарман, паянхи кун та унăн нихăçан партиллĕ поручени те çук. Çавна пула вăл парторганизацирен уйăрălса кайнă. Ферма ĕçне япăхлатнă. Кандидат группин парторгĕ Седова юлташ та Иванова юлташпа куллен ĕçлесе пыман.

Райком инструкторĕсем, уйрăмах пĕччен коммунистсемпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Пĕччен коммунистсем хушшинче стаж иртсе кайнă кандидатсем те пур.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕ ВКП(б) ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе парторганизацисем умне татăклă задачăсем лартрĕ. Пленум решенине пурнăçласа пырса парти ретне ӳстерес ĕçе татах та ытларах вăйлатасси районри парторганизаци умĕнче тăракан пысăк задача пулать.

С. Соколов.

Пĕлтерӳ

Апрелĕн 23-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Хĕрлĕ Çар çуртĕнче докладчиксемпе агитаторсем валли доклад пулать. Доклад теми: **«Майăн 1-мĕшĕ—рабочи класăн боевой вăйĕсене пăхса тухмалли кун».**

Докладчик—ВКП(б) Горкомĕн секретарĕ **Федоров** юлташ.

Билетсене ВКП(б) Горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) илмелле.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Наркомсобесĕ районрипе хула собесĕсене тата отечественнăй вăрçă инвалидĕсене çакăн çинчен пĕлтерет:
Канашри протез мастерскойĕн бригади Шупашкарта апрелĕн 26-мĕшĕнче тата 27-мĕшĕнче ĕçлет. Малашне кашни уйăхра 1-мĕшĕпе 2-мĕш числасенче ĕçлет.
Протез туянас текеп инвалидсен, районрипе хулари собессенчен наряд илсе, кăтартнă вăхăта Шупашкара çитмелле, çак адреспа пымалла: Шупашкар, Хĕрлĕ площадь, 24. Наркомсобес.

Чебторга икĕ старши бухгалтер тата подсобнăй хуçалăхра ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамĕ, 11-мĕш çурт, Чебторгăн кадрсен пайĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1030 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.